Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

6 (7431) № ✻ Юн кун, 2007 çулхи январĕн (кăрлач) 24-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ял тăрăхĕсен кунĕсенчен

## Çыхăну тачăрах пулмалла

Муркаш ял тăрăхĕн кунĕ те ытти çĕрти евĕрлех иртрĕ. Район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсем, ушкăнсем çине пайланса, Е.Андреев ячĕллĕ хуçалăх фермисенче, промышленность предприятийĕсенче, вĕрентӳ учрежденийĕсенче пулчĕç. Ытти ял тăрăхĕсемпе пĕрпеклĕх кунта – ял çыннисене çакнашкал тĕл пулусем кирли пулни палăрни. Ĕç коллективĕсемпе иртнĕ тĕл пулусенче те яр уççăнах курăнчĕ çакă. Чуна ыраттаракан пулăмсем кунта та сахал мар.

Уйрăмлăхĕ вара çакăнта пулĕ: ытти ял тăрăхĕсемпе танлаштарсан, район центрĕ шăпах асăннă ял тăрăхне кĕни ял тăрăхĕнче ĕçлекенсене икĕ хут яваплăрах туйма хистет, мĕншĕн тесен асăннă ял тăрăхĕ хăйĕн ĕçне епле йĕркеленипе районăн сăн-сăпачĕ те таччăнах çыхăннă. Иртнĕ çул ытларах ĕçе вырăнтах татса пама пуçлани кунта та пур ĕçе те вăхăтра йĕркелесе ĕлкĕрейменнине кăтартса парать. Ял тăрăхĕн кунĕнче те палăрчĕ çакă.



Предприятисен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашакан ушкăн хăйĕн ĕçне Муркашри кирпĕч заводĕнчен пуçларĕ. Кунта тӳрех çакăн пек пĕтĕмлетӳ туни те ытлашши пулмĕ. Районти пур предприяти те çак коллектив пек ĕçлесен, районти ял хуçалăх, ытти предприятийĕсен ертӳçисен пурин те кунти ертӳçĕсем пек ĕçе йĕркелеме пĕлни тапса тăрсан, паян хăш-пĕр предприятисем йывăрлăха кĕрсе ӳкмен пулĕччĕç.

Йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ предприятие ура çине тăратма пултарчĕç çеç мар, аталану çулĕпе те паян асăннă коллектив çирĕппĕн утать. Талăкра кунта 25 пин штук кирпĕч кăлараççĕ. Мускаври 5-6 фирмăра паян Муркашсен продукцине хапăлласах туянаççĕ. Иртнĕ çул пурĕ 5 миллион та 225 пин штук кирпĕч кăларнă пулсан, кăçал кăтартăва 10 миллиона çитерес ĕмĕтлĕ. Кăçалхи май уйăхĕнче тепĕр кăмакана хута ячĕç кунта.

-Предприяти пĕр вăхăт ĕçлемен хыççăн çĕнĕрен уçăлсан, ĕçлекенсем çитместчĕç. Юрать-ха шкул ачисем пулăшрĕç, Турă сывлăх патăр вĕсене, - тет "Муркашри кирпĕч завочĕ" акционерсен уçă обществин директорĕ Юрий Иванович Петров.

Паян вара предприятире 168 çын ĕçлет. Вăтам ĕç укçи 6 пин тенкĕрен те иртет. Дисциплина çирĕп. Эрех-сăрапа иртĕхес шухăш çук никамăн та. Çакнашкал ĕç укçиллĕ вырăнтан камăн-ха йăпăр-япăр тухса ӳкес килтĕр. Малтанхи пек каласан, Мичурин ячĕллĕ хуçалăх пулнă территоринчи çынсем хăйсем кăна пĕр бригада пулаççĕ. Асăннă предприятире районăн тĕрлĕ кĕтесĕнче пурăнакансем ĕçленине тĕл пулура паракан ыйтусем те çирĕплетрĕç. Турайне каякан çул япăх пулни, Муркашра пуш кĕленчесем йăваланса выртни, плотина патĕнчи тирпейсĕрлĕх тата ытти ыйтусем пăшăрхантарни палăрчĕ.

Муркашри кирпĕч завочĕ иртнĕ çул виçĕмçулхинчен çапла майпа 11,6 процент чухлĕ ăнăçлăрах ĕçлерĕ. "Моргаушавтотехсервис" акционерсен уçă обществин ку кăтарту 3, 7 процент чухлĕ лайăхрах ĕçленипе танлашать пулин те, кунта вăй хуракансем ĕç укçи пысăккипе мухтанаймаççĕ. Чунĕсем кӳтсе çитни вара аванах палăрчĕ. Пурăнмалли нумай хваттерлĕ çуртсем çывăхĕнчи сарайсенчен тислĕк шывĕ юхса тухса тавралăха тасамарлантарни, Муркашри Перекет банкĕн уйрăмĕ çумĕпе иртекен асфальт тротуара машинăсемпе çӳресе юрăхсăра кăларасран шикленни, район центрĕнче пушă кĕленчесем йăваланса выртни, вĕсене тата пластик кĕленчесене вырнаçтарма çукки, хваттерсене харпăр хăй ăшăтмалли йĕркепе çыхăннă ыйтусем тата ыттисем.

Çак ыйтусем мĕн çинчен калаççĕ? Ял тăрăхĕпе халăх хушшинче çыхăну тачăрах пулмалли çинчен.

- Халăх çинчен суйлав чухне çеç аса илеççĕ, кайран манса каяççĕ (сăмах кунта пур шайри суйлав пирки те пырать),- асăннă тĕл пулура чун кӳтнипе каланă сăмахсенче тĕрĕслĕх вара çук мар.

Халăхпа çеç мар, пĕр территоринче вырнаçнă предприятисемпе те тачă çыхăну çукрах-ха хальлĕхе. Халь çеç каланă тата çак çитменлĕхсем вĕсем пĕр Муркаш ял тăрăхне çеç пырса тивмеççĕ. Ял тăрăхĕсен кунĕнче каçхине халăхпа иртекен тĕл пулусене ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисем халăх умне тухма "именни" шăпах çакăн çинчен калать пулĕ. Асăннă çитменлĕхе район пуçлăхĕ Ю. А. Иванов иртнĕ тунти кун район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсемпе ирттернĕ канашлура та палăртсах каларĕ.

Халĕ шăпах калаçу пуçламăшĕнче палăртнă уйрăмлăх патне таврăнар. Вăл та халь çеç асăннă çыхăнусăрлăха кăтартса парать.

-Январь çурри çитрĕ, паян та ял тăрăхĕпе урамсене электроçутă парса тăрассипе, тирпей-илем кĕртессипе килĕшӳ туман. Кун пекки халиччен нихçан та пулман. Урамсене юр хӳсе лартсан, мĕн тумалла? Эпир хуçалăх расчетлă предприяти, пирĕн килĕшӳпе ĕçлемелле. Е урамри электроçутта сӳнтерессе кĕтеççĕ-и ял тăрăхĕнче, - тарăхнине те, тĕлĕннине те пытармасть "Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх" МУП ертӳçи Н.А. Шишкин. – Район центрĕ яланах эпир тирпей-илем кӳнипе малти вырăнсене йышăнса пынă, халĕ вара мĕн ĕçлемеллине те пĕлместпĕр килĕшӳсĕр. Шывпа тивĕçтермелли системăна проектласси те çак сăлтавпах малалла каймасть.

- Чун пурпĕрех чăтмасть: килĕшӳне туса хатĕрлерĕмĕр хамăрах: алă пусса параççĕ-и-ха ял тăрăхĕнче, - хушса хучĕ кăшт тăрсан Николай Александрович.

Çак ӳпкелешӳ ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен пуçарулăхпа яваплăха татах та ӳстермелли пирки каламасть-и? Çаплах пуль. Муркашри нумай хваттерлĕ пĕр çуртрах темиçе пĕчĕк ял йышĕ чухлĕ çынсем пурăнни, пĕр туса çитереймен ĕç нумай-нумай çынна пырса тивни пушшех те çапла тума хистет. Муркаш район центрĕ пулса тăни хăех проблемăсем çине тарăнрах куçпа пăхма хистет.

Татса паман ыйтусем Е.Андреев ячĕллĕ хуçалăхра вара сахал мар. Фермăсенче йĕрке тума кунта ĕçлемелле те ĕçлемелле. Ветврач, зоотехник-селекционер, Шаптакри сысна фермин заведующийĕ те çук. Пĕчĕк ĕç укçи те вăхăтра кĕсьене кĕмест пулсан, кам килсе татса парĕ ку ыйтусене?

Нумай-нумай ыйтупа пуç ыратать паян ял тăрăхĕн. Çав вăхăтрах преступленисен йышĕ палăрмаллах ӳсни те право йĕркине сыхлакан органсемпе тачăрах çыхăнса ĕçлемелли пирки калать.

Пĕтĕмĕшле вара ял тăрăхĕ пурăнать, ĕçлет. Асăннă çитменлĕхсем те пĕтерме пултармалласкерсемех. Вырăнта пурăнма интереслĕрех, йĕрке пултăр тесен вара халăхăн та активлăрах пулмалла.

**Л. ПАВЛОВА.**

Çитĕнӳ

## Икĕ кунтан – 2-мĕш «кĕмĕл»



Муркаш хĕрĕн Татьяна Моисееван çитĕнĕвĕ пирки хаçатăн иртнĕ номерĕнче пĕлтернĕччĕ. Январĕн 17-мĕшĕнче вăл тĕнче кубокне çĕнсе илессишĕн ирттерекен ăмăртăвăн юлашки тапхăрĕнче Словенири Поклюке хулинче спринтер ăмăртăвĕнче 2-мĕш вырăн йышăнса кĕмĕл медале тивĕçнĕ.

Тепĕр икĕ кунтан вара – каллех çитĕнӳ, каллех «кĕмĕл». Январĕн 19-мĕшĕнче вăл биатлон енĕпе йĕрлесе пырассипе ăмăртса каллех çитĕнӳ тунă, иккĕмĕш вырăна тухма пултарнă.

Сăмах май, ку кăтарту чылай болельщиксемшĕн те кĕтменлĕх пулса тăнă. Апла пулин те ентешĕмĕр ята çĕре ӳкермен.

Малашне те ăнăçусем сунатпăр çамрăк спортсменкăна!

**Хамăр инф.**

Ĕçлĕ тĕл пулу

## «Сыхланакана Турă та сыхлать», -

теççĕ халăхра. Чăннипех те вара инкек-синкеке кĕтместпĕр пулин те, асăрханни нихăçан та ытлашши пулмĕ. Çавăнпа та хамăр пурнăçа, кил-çурта, ял хуçалăх культурисене тата ыттисене те страхлани питĕ вырăнлă.

Январĕн 17-мĕшĕнче пирĕн района Мускавран делегаци килсе çитрĕ. Аякри хăнасем çаксем пулчĕç: Раççей Ял хуçалăх министерствин «Агропромышленность производствин сферинчи страхованине патшалăх енчен пулăшассин Федераллă агентстви» Федераллă патшалăх учрежденийĕн директорĕ В.В. Щербаков, унăн çумĕ В.С. Шустер, «Агропромстрах» ассоциацийĕн ертӳçи Л.Н. Вологдин, «Агропромстраховани, кредитовани» журнал представителĕ Д.Н. Чепрасов тата Чăваш Республикинчи «Чувашия-Поддержка» страхлакан компани уçă акционер обществин генеральнăй директорĕ З.В. Воробьева. Вĕсем çак компанин районти представительствинче ĕçлĕ канашлу ирттерчĕç, малашлăхра пурнăçламалли ĕç планне çирĕплетрĕç, чылай ыйтăва сӳтсе яврĕç. Районти представительствăн ертӳçи Ф.В. Кирпичникова кунти лару-тăрупа паллаштарчĕ.

Сăмах май, Чăваш Республикинче Муркаш районĕ куллен пурнăçлакан ĕçсен калăпăшĕпе иккĕмĕш вырăнта. Компани клиенчĕсем хăйсен ыйтăвĕсемпе килни хăнасен кăмăлне çĕклерĕ. Çакăнтах «Согласие» кредит кооперативĕ вырнаçни пуриншĕн те меллĕ. Унăн пулăшăвĕпе уйрăм предпринимательсем çеç мар, ял хуçалăх предприятийĕсем усă кураççĕ. Унсăрăн епле-ха, çур аки те инçех мар, сĕрмелли-çунтармалли материал та кирлĕ. Ăв, çанталăк та ял хуçалăх культурисене тĕпченине куратпăр. Çавăнпа та паянхи çеç мар, ыранхи те шутлаттартăр.



**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: ĕçлĕ тĕл пулу вăхăтĕнче.**

Юбилей

### Саламлатпăр

Çатракасси ял тăрăхĕнчи Çатракасси ялĕнче пурăнакан пирĕншĕн чи хаклă та чунтан юратнă аннене, хунямана, кукамая, асаннене – **Алевтина Дмитриевна ДАНИЛОВАНА** 70 çул тултарнă ятпа чунчĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Вăрăм кун-çул, тулли телей, çирĕп сывлăх сунатпăр. Çирĕп сывлăхпа татах та нумай çул ачусемпе, мăнуксемпе савăнса пурăнмалла пултăр.



Хаклăран та хаклă аннемĕр, эс пурришĕн савăнатпăр, хамăра çав тери телейлĕ туятпăр.

Тав тăватпăр сана чĕререн,
Тайма пуçăм сана пирĕнтен.
Ан чирле, ан ватăл нихăçан,
Пул хаваслă, кăмăллă ялан.
Сывлăх пултăр мĕн ватăличчен,
Пурăнма сунатпăр çĕр çулччен.

**Саламлаканĕсем: ачисем, кĕрӳшĕсем, кинĕсем, мăнукĕсем тата вĕсен ачисем, хăти-тăхлачисем тата çывăх тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăрăма, юратнă аннене, ырă кăмăллă кукамая, хаклă асаннене – Ятман ялĕнче пурăнакан **Елизавета Ивановна ЗАЙЦЕВАНА** сумлă юбилей ячĕпе чунчĕререн саламлатпăр. Эсĕ нумай çул хушши Çатракассинчи вăтам пĕлӳ паракан шкулта ачасене воспитани парас ĕçре вăй хуратăн.

Мăшăрăм, аннеçĕм, кукамай, асанне, эсĕ пирĕншĕн çĕр çинчи чи çывăх çын. Эс пурри – пирĕн савăнăç, пуянлăх. Эсĕ ырă кăмăлупа, ĕçченлĕхӳпе, тирпейлĕхӳпе палăрса тăратăн. Çуралнă кун ячĕпе саламласа сана эпир ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр. Тӳпере саншăн яланах ăшă сарă хĕвелпе телей çăлтăрĕсем кăна çуталса тăччăр, хуйхă-суйхă айккинчен пăрănса иртчĕр. Çĕр çул пурăн, ан чирле. Юратнă аннеçĕм, санăн яланах ачусемпе тата мăнукусемпе савăнса пурăнмалла пултăр. Çĕр çинчи мĕн пур ырлăха сана сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем Настьăпа Карина.**



Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан **Григорий Николаевич ПЕТРОВ** январĕн 21-мĕшĕнче 80 çул тултарчĕ. Эпир юратнă аттене, асаттене çирĕп сывлăх, телей, вăрăм кун-çул сунатпăр, хуйхă-суйхă, чир-чĕр айккинчен пăрăнса иртчĕр. Вăл мĕн пĕчĕкрен пуçласа ĕмĕр тăршшĕпех музыкăна юратакан çын. Тĕрлĕ тĕслĕ музыка инструменчĕсемпе выляма пĕлет. Халĕ те вăл пире тăван киле пуçтарăнсан вĕсемпе выляса савăнтарать. Хамăрăн юратнă аттене, асаттене эпир уншăн питĕ пысăк тав сăмахĕ калатпăр. Вăл пурришĕн савăнатпăр, унпа мухтанатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, 3 хĕрĕпе кĕрӳшĕсем, 9 мăнукĕ, 7 прамăнукĕ, хăтисемпе тăхлачисем, тăванĕсем.**



Ятман ялĕнче пурăнакан **Антонина Никитична ЗЕМЛЕМЕРОВАНА** январĕн 26-мĕшĕнче 60 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Пирĕншĕн эс пулнă яланах пит ырă, пул эс малалла та çаплах, пултăр сан сывлăх, телей, ырă пурнăç, уçă кăмăлу яланах.

Эс пурри пире савăнтарать,
Пур тăван та сана саламлать.
Пурăнма сунатпăр çĕр çулччен.

**Салампа Гавриловсем.**